**Кĕркунне**
Акă килчĕ кĕркунне,
Сапалать хăй илемне.
Хĕрлĕ, сарă çулçăсем
Илĕртеççĕ куççене.
**Валерия Фомина,**
**Çĕнĕ Шупашкар, 4-мĕш шкул**

**Кушак**
Пирĕн килте кушак пур,
Унăн икĕ çури пур.
Пĕр çурийĕ чăрсăрскер,
Шав вылясшăн çăмхапа.
Тепри вара, наянскер,
Тек çывăрать йăмăкпа.
**Анастасия Иванова,**
**Çĕнĕ Шупашкар, 4-мĕш шкул**

**Манăн кушак**
Ман хитре çеç кушак пур.
Ах, ытла та вăл маттур!
Мăрлатса савăнтарать,
Кăмăла лайăхлатать.
Эп тыттармăп никама
Хам хитре кушакăма.
Чунăм ун патнех туртать,
Вăл та мана юратать.
**Наталия Надеева,**
**Çĕнĕ Шупашкар, 4-мĕш шкул**

**Утмăл турат**
Уй-хир тутлăн тĕлĕрет,
Ирпе ирех чĕрĕлет.
Кăвак чечек вăранать,
Пучах çумнее йăпшăнать.
Сарă ыраш анаслать,
Ăшă сăмахне калать:
– Утмăлтурат чечекки,
Тата пур-ши сан пекки?
Эсĕ манпа юнашар,
Çавăнпа та кичем мар!
**Алексей Анисимов.**
**Шупашкар, 1-мĕш шкул.**

**Кĕркунне**
Çитрĕ кĕркунне,
Çумăр, ав, çăвать,
Йывăççем çинчен
Çулçă тăкăнать,
Кайăк сасси çук,
Пĕлĕтлĕ тӳпе,
Вăйлă çил вĕрет –

Тунсăх чĕрере.
Настя Комарова.
Çĕнĕ Шупашкар, 20-мĕш шкул.

Туссем
Тухрĕ Анюк урама
Юлташĕпе выляма,
Илчĕ Хăйпе пукане
Тата пĕчĕк упине.
Ларчĕç вĕсем Ванюкпа
Хăйăр çинче выляса,
Пуканепе упана
Хварчĕç унтах пăрахса.
Вика Майкова.
Çĕнĕ Шупашкар, 20-мĕш шкул.

Кĕркунне
Кĕр кунĕсем те çитрĕç,
Йывăçсем саралчĕç,
Саралчĕç те çаралчĕç.
Çумăр çăвать кашни кун,
Хĕвелĕ те пытанчĕ,
Пытанчĕ те тухмарĕ.
Виктория Васильева.
Çĕнĕ Шупашкар, 20-мĕш шкул.

Вежливый водитель
Взгляд его стремится в даль,
Он сливается с дорогой.
Жмет сильнее на педаль,
И мчатся прочь его тревоги.
Водителем от Бога быть
Дано не каждому, поверь.
Машину надо так водить,
Как будто это дикий зверь.
Даниил Лукин.
Чебоксары, школа №19.

Хĕлле
Акă çитрĕ кĕтнĕ вăхăт –
Çурĕ, çурĕ шурă юр.
Таврана йăлтах шуратнă –
Савăнтарчĕ Çĕнĕ Çул!
Милана Арсентьева, СОШ №64

Хĕлле
Хĕл çитнине пĕлтерсе,
Çĕн Çула хатĕрленсе,
Хĕл Мучипе Юр Пике
Хатĕрлеççĕ миххине.
Çăмламас алсишпеле,
Çĕнĕ  ăшă кĕрĕкпе

Тухăп эп тăвайккине
Ярăнмашкăн йĕлтĕрпе.
Ангелина Филиппова, СОШ №64

Хĕлле
Ак хĕлле те çитрĕ-
Урамра хитре,
Йывăçсем шап-шурă
Тăхăннă кĕпе.
Ачасем выляççĕ,
Йĕлтĕрпе чупаççĕ,
Питĕ савăнаççĕ,
Çĕн Çула кĕтеççĕ!
Виктория Данилова, СОШ №64

**Сывлăхлă пулас тесен**
Физзарядка тумалла,
Сив шывпа çăвăнмалла.
Сывлăхлă пулас тесен,
Ачаран тăрăшмалла
Апат çиме лариччен
Алăсене çумалла.
Эмелпе сиплениччен
Супăньпе туслашмалла.
Сывлăха çирĕплетме
Спортпала туслашмалла.
Юрамасть халь чирлеме,
Ялан çирĕп пулмалла.
**Егорова Наташа,**
**Шупашкар, 1-мĕш гимнази.**

Юлташ
Юрататăп юлташа,
Унпа пĕрле выляма,
Задачăсем шутлама
Пулăшатăп эп ăна.
Кичем пулнă чух вара
Килет ялан ман пата,
Ăшă сăмах каласа
Хавхалантарать мана.
Виктория Васильева.
Çĕнĕ Шупашкар, 20-мĕш шкул.

Хĕлле
Урамра хĕлле –
Юр çăвать.
Вăрманта мулкач
Йĕр тăвать.
Аллăмра – çуна,
Тăвайкки – умра.
Ярăнса ансан

Мулкача хăвалăп.
Виктория Васильева.
Çĕнĕ Шупашкар, 20-мĕш шкул.

Хĕлле
Юр çăвать, юр çăвать,
Манăн шăллăм савăнать –
Ирех урамаваскать,
Çунашкапа ярăнать.
Лера Степанова.
Çĕнĕ Шупашкар, 20-мĕш шкул.

Кушак
Манăн ялта кушак пур.
Антонина ятлă вăл.
Шăши тытать кашни кун –
Ах, маттур çав манăн вăл!
Саша Никитин.
Çĕнĕ Шупашкар, 20-мĕш шкул.

Тĕллев
Эпĕ Рома ятлă,
Эпĕ – шкул ачи.
Вĕренетĕп эп шкулта,
Иккĕмĕш класра.
Хаваспах çӳретĕп
Унта кашни кун,
Ăслă çын пуласшăн
Эпĕ кунран кун.
Рома Макаров.
Çĕнĕ Шупашкар, 20-мĕш шкул.

Мой папа – вежливый водитель
Руки у него в бензине,
А душа, как снег, чиста.
Кто нас возит? А меж делом
Чутко спросит: «Как дела?»
В чистоте всегда машина –
Блеск, порядок в ней царит.
Папа – вежливый мужчина,
Пешеходам не хамит.
Вот рассеянный мальчишка
К нам на красный свет идет,
Папа строго лишь посмотрит,
Пропустив его вперед.
Папа, прежде чем поехать,
Пристегнет своих детей.
Безопасность на дорогах
Начинается с ремней!
Диана Кузьмина.
Чебоксары, школа №19.

**Çĕнĕ çул саламĕ**
Акă çитрĕ Çĕнĕ çул,
Пирĕншĕн телей вăл – кур!
Ку уявра савăн, кул,
Савăнма сăлтавĕ пур.
Хĕл Мучипе Юрпике
Илсе килчĕç парнесем.
Йăмăк валли пукане,
Мана валли йĕлтĕр.
Аннесемпе аттесем,
Аппасемпе пиччесем,
Ачасем, учительсем,
Лайăх иртчĕр уявсем.
Уяв ячĕпе сире,
Саламлатăп чĕререн,
Ырлăх, сывлăх та телей
Эп сунатăп пурне те!
**Никита Леонтьев.**
**Шупашкар, 1-мĕш гимнази.**

**Сывлăхлă пулас тесен...**
Кăшкăрать ирех паян
Киккириклĕ сар автан:
«Вырăн çинче мĕн выртан?
Тăр часрах, чуп çар уран.
Тăр шыв пултăр сан тусу,
Апат умăн алă çу.
Пӳлĕме уçăлтарар –
Чӳречене яр уçар!
Сывлăхлă пулас тесен,
Чир-чĕртен тарас тесен
Пахча çимĕçпе куллен
Туслашасчĕ ачасен!»
**Виктория Николаева.**
**Шупашкар, 18-мĕш шкул.**

**Сывлăхлă пулас тесен...**
Эпĕ Таня – хĕр ача,
Вĕренетĕп çак шкулта,
Юратса та тăрăшса
Ырă, ăслă çын пулма.
Пурнăç çулĕ такăр мар...
Утнă чух утса пырар,
Чупнă чух чупса пырар,
Пурнăç ыррипе савнар.
Наркăмăш, эрех, сăра
Ан пулччăр пирĕн чунра.
Çут хĕвел шевли телей
Кӳтĕр кашни кун мана.
Эпĕ Таня – хĕр ача,
Ăс-тăнпа патвар, таса.
Вĕренеп сатур пулма

Юратса та тăрăшса.
**Татьяна Прокопьева.**
**Шупашкар, 18-мĕш шкул.**

Манăн Софья йăмăк пур,
Юрататăп эп ăна.
Софья – пĕчĕк, виççĕре,
Ача садне вăл çӳрет.
**Наташа Егорова.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 4-мĕш шкул.**

**Хĕлле**
Мамăк евĕр, çĕр çине
Юр пĕрчи ӳкет.
Çут çанталăк витĕнет
Шап-шурă тумпа.
Çитрĕ-çитрĕ сивĕ хĕл,
Йывăçсем çара,
Хĕл Мучийĕ чĕпĕтет,
«Кĕрĕр, – тет, – ăшша».
**Анна Арефьева.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 4-мĕш шкул.**

**Сывлăхшăн эп тăрăшатăп**
Ирхине ирех тăратăп,
Физзарядка эп тăватăп.
Сивĕ Шывпа çăвăнатăп,
Сывлăхшăн эп тăрăшатăп.
Саккăрта шкула каятăп,
Унта пĕлӳ туянатăп.
Кайран футболла вылятăп,
Спортпа туслă пурăнатăп.
**Екатерина Мешкова.**
**Шупашкар, 4-мĕш гимнази.**

**Сывлăха упрас тесен**
Сывлăха упрас тесен
Кашни кунах ирсерен
Физзарядка тумалла,
Çынна ырă сунмалла.
Аннене пулăшмалла,
Урамра та чупмалла,
Вăхăтлă çывăрмалла,
Тутлă тĕлĕк курмалла.
Çакна та эс асра тыт –
Пахча-çимĕç çимелле.
Хĕлле çитсен хăвăртрах
Йĕлтĕрпе ярăнмалла.
Компьютерпа туслашсан,
Сывлăхшăн вăл, ай, тăшман.
Шывра иш, выля, йăван –
Пулăн эс паттăр Йăван!

**Софья Кудрявцева.**
**Шупашкар, 4-мӗш гимнази.**

**Парне**

Кантӑк ҫинче чӳлмекре
Хӗрлӗ роза чечекре.
Парнелерӗм аннене
Чи хитре чечексене.

**Максим Белов.**
**Шупашкар, 41-мӗш шкул**

**Савнӑ ҫӗр**

Савнӑ ҫӗр, Чӑваш ҫӗр-шывӑм!
Юрататӑп эп сана.
Тӑван ен, Чӑваш ҫӗр-шывӑм!
Мухтанатӑп эп санпа.
Кунран кун эс ешеретӗн,
Ҫултан ҫул ӳссе пыран,
Кашни ир мана пиллетӗн
Вӗренмешкӗн тӑрӑшса.

**Кира Казакова.**
**Ҫӗнӗ Шупашкар, 2-мӗш шкул.**

**Хӗлле**

Сивӗ хӗл те ҫитрӗ,
Уйсене шур юрпа витрӗ,
Хӗле эпӗ пит юрататӑп.
Ҫӗнӗ ҫула кӗтетӗп,
Кӗҫех Хӗл Мучи килет,
Мана парне парнелет.

**Настя Бастеева.**
**Ҫӗнӗ Шупашкар, 13-мӗш шкул.**

**Чунӑм савӑнать**

Урамра хӗлле –
чунӑм савӑнать.
Йӑмӑкпа пӗрле
Ярӑнас килет.
Инҫете-инҫете
Йӗлтӗрпе каймалла,
Савӑнса-кулса
Пирӗн ярӑнмалла.

**Настя Федорова.**
**Ҫӗмӗрле, 1-мӗш шкул.**

**Канаш – тӑван хула**

Эп ҫуралнӑ Чӑвашра,
Пурӑнатӑп Канашра.
Пиллӗкмӗш вӑтам шкулта
Вӗренетӗп тӑрӑшса,
Чӑваш чӗлхи урокне
Эп ҫӳретӗп савӑнса.

Маша Александрова.
Канаш, 5-мĕш шкул.

Юлташ
Ýрататăп юлташа,
Унпа пĕрле выляма,
Задачăсем шутлама
Пулăшатăп эп ăна.
Кичем пулнă чух вара
Килет ялан ман пата,
Ăшă сăмах каласа
Хавхалантарать мана.
Виктория Васильева.
Çĕнĕ Шупашкар, 20-мĕш шкул.

Хĕллехи ир
Пĕрремĕш юр çинче утатăп
Эп юратнă шкул енне.
Чăн та питĕ савăнатăп
Кĕтсе илнишĕн хĕл кунне.
Ульяна Осипова.
Çĕнĕ Шупашкар, 13-мĕш шкул.

Хĕлле
Хĕл килет, хĕл килет,
Урамра выляма пит аван.
Юр çăвать, юр çăвать,
Çĕнĕ çул часах çитет.
Соня Тукманова.
Çĕнĕ Шупашкар, 13-мĕш шкул.

Çĕнĕ çул
Кĕçех Çĕнĕ çул çитет,
Кĕçех Хĕл Мучи килет,
Сăвă калама ыйтать,
Уншăн парнесем парать.
Настя Овчинникова.
Çĕнĕ Шупашкар, 13-мĕш шкул.

Хĕлле
Илемлĕ хĕл те çитрĕ,
Сивĕ çил вĕрме пуçларĕ.
Ача-пăча тăвайккинчен
Вĕçет кăна кунсерен.
Катя Чернова.
Çĕнĕ Шупашкар, 13-мĕш шкул.

Уяв ячĕпе
Чечек çыххи аллăмра,
«5» паллă сумкăра.
Аннене саламлама,
Ӳсĕмпе савăнтарма

Эп утатăп васкаса,
Кăмăллăн йăл-йăл кулса.
**Соня Муллина.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.**

**Манăн анне**
Ман аннеçĕм илĕртӳллĕ,
Пит илемлĕ, йăрăс пӳллĕ,
Пултаруллă, тараватлă,
Ырă кăмăллă, хаваслă.
Эс асамçă, ман анне,
Çунат пар ачусене.
**Маша Никитина.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.**

**Пулăшакан**
Иртенпех анне ĕçлерĕ,
Кун каçа ырса та çитрĕ.
Пулăшрăм эп аннене,
Шăвартăм чечексене.
**Вика Курбатина.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.**

**Ачасемшĕн тăрăшатăн**
Çулсерен пĕлӳ паратăн,
Ачасемшăн тăрăшатăн,
Вĕсенчен ыр çын тăватăн,
Вĕсемпе эс савăнатăн.
Пăтăрмах сиксе тухсассăн
Ырă сĕнӳсем паратăн,
Пурнăçра йывăр пулсассăн
Яланах эс пулăшатăн.
Ĕмĕр тăршшĕпе сана
Тытăпăр эпир асра,
Тӳрĕ кăмăллă пулса
Ирттересчĕ пурнăçа.
**Семен Елизаров.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.**

**Вĕрентекене – тав**
Чун-чĕререн тав тăватпăр,
Ăнăçу сире сунатпăр,
Пурнăр ĕмĕр савăнса,
Ырлăхпа телей курса.
Тав сăмахĕ вĕрентнишĕн,
Ăслă-тăнлă çын тунишĕн,
Кирлĕ чух çумра пулнишĕн,
Пирĕншĕн чунна панишĕн.
**Валя Тющина.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.**

**Вĕрентӳçĕ**

Пирĕн вĕрентӳçĕ –
Пит хастар ертӳçĕ,
Ялан тăрăшуллă,
Питĕ пултаруллă.
Пире вĕрентет
Кăмăллă пулма,
Пĕрмаях хистет
Çынна пулăшма.
Эпир тăрăшатпăр
Лайăх вĕренме,
Ăс-хакăл пухатпăр
Тĕнчене пĕлме.
**Саша Никифоров.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.**

**Витаминсем**
Эп сире калап, туссем,
Пит нумай витаминсем
Пахчари çимĕçсенче,
Пĕтĕм вăй-хал вĕсенче.
Спортсменсем пулас килсен,
Чир-чĕртен тарас тесен
Пахча çимĕçпе куллен
Туслашасчĕ ачасен!
**Полина Николаева.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.**

**Йыт çури**
Пит хаваслă йыт çури,
Пăлтăр-пăлтăр ун хӳри,
Вăл юратать выляма,
Тутлă шăмă кăшлама.
Чупрĕ тухрĕ урама,
Вăхăт çитрĕ уçăлма.
Питĕ лайăх ман юлташ,
Эс те унпала туслаш.
**Игорь Макаров.**
**Шупашкар, 41-мĕш шкул.**

**Кушак**
Манăн ялта кушак пур.
Антонина ятлă вăл.
Шăши тытать кашни кун –
Ах, маттур çав манăн вăл!
**Саша Никитин.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 20-мĕш шкул.**

**Шурă тум**
Юр çăвать, юр çăвать,
Пĕтĕм çĕре шуратать,
Хĕл çитнине кăтартса
Шурă-шурă тумтирпе

Йывăçсене, пӳртсене
Тумлантарать васкаса.
**Дарья Васильева.**
**Шупашкар, 6-мĕш шкул**

**Асамат кĕперĕ**
Çумăр иртрĕ,
Хĕвел çиçрĕ,
Асамат кĕперĕ
Шыв çийĕн тухрĕ.
Йĕри-тавра пĕтĕмпе
Кайрĕ çуталса,
Сывлăш уçă пулнипе
Кăмăла çĕклет.
**Антон Яппаров.**
**Шупашкар, 57-мĕш шкул**

**Красивая зима**
Она – белоснежная,
Она – холодная,
Хотя она холодная,
Все равно красивая!
**Даша Румянцева.**
**Чебоксары, СОШ №28**

Новогодние огни...
Белые снежинки...
Помнишь, добрый Дед Мороз
Приносил подарки!
**Влада Селиверстова.**
**Новочебоксарск, СОШ №3**

Наступает Новый год,
Дед Мороз придет к нам скоро,
Скоро-скоро он придет,
И подарки нам подарит!
**Наташа Яшманова.**
**Новочебоксарск, СОШ №3**

**Пирĕн çемье**
Пирĕн çемье питĕ пысăк:
Атте, анне, пичче пур.
Эпир туслă пурăнатпăр,
Пĕр-пĕрне телей сунатпăр.
**Денис Данилов.**
**Шупашкар, 47-мĕш шкул.**

**Наша мама – лучшая**
Наша мама – лучшая,
Папа так сказал,
Когда сестренку с мамой
С больницы забирал.

Софья Думилина.
Чебоксары, школа №47.

Уха из карасей
Я шел по берегу реки,
А в ней плескались караси.
Уду я быстро размотал
И карасей я всех поймал.
Бабуле я их отнесу,
Она нам сварит всем уху.
Уху мы сразу все съедим,
Чтоб было у нас много сил
Илья Дрозд.
Чебоксары, школа №47.

Нету времени шататься
Нету времени шататься:
Я люблю читать, писать,
Про планшет не забываю,
Телевизор я смотрю,
Папу, маму я люблю.
Данил Голубев.
Чебоксары, школа №47.

Маттур кушак
Манăн килте кушак пур,
Пуринчен те вăл маттур,
Ирех тăрать, çăвăнать,
Мана пырса вăратать,
Эп килессе пит кĕтет,
Манпа вылясси килет.
Настя Логинова.
Çĕмĕрле, 2-мĕш шкул.

Ман кушак
Ман килте кушак пурнать,
Каçхине шăши тытать,
Ирхине нумай çыврать,
Выляма вăл юратать.
Валерий Павлов.
Çĕмĕрле, 2-мĕш шкул.

Путек
Асаннемĕн путек пур,
Хăй вара вăл пит маттур:
Вылять, сикет, сĕт ĕçет,
Амăшне чунтан савать,
Çуркунне çитсен вара
Хĕвел ăшшинче вылять,
Мана курсан яланах
Савăнса чупса пырать.
Эпĕ ăна юратса

Çăкăр чĕлли паратăп:
«Ӳс эс, манăн пĕчĕк тус,
Çăм алсиш мана кирлех».
**Милена Пояндаева.**
**Çĕмĕрле, 2-мĕш шкул.**

**Шурă хĕл**
Пит килĕшет шурă хĕл:
Пур çĕрте те кăпăш юр,
Ача-пăча йĕлтĕрпе,
Çунашкапа, конькипе
Хĕпĕртесе ярăнать,
Хĕл Мучине тав тăвать.
**Аня Высоцкая.**
**Çĕмĕрле, 2-мĕш шкул.**

**Уйăп**
Уйăп – хитре хĕрлĕ кайăк,
Вăрманта вăл пурăнать,
Пилеш, палан юратать.
Манăн кантăк умне
Килсе ларчĕ паян.
Уйăпăм – тĕлĕнтермĕшĕм эс!
**Владимир Марков.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 5-мĕш шкул.**

**Кил картинче**
Шурă путек пирĕн пур,
Сиккелесе вăл çӳрет,
Ытти сурăхсемпеле
Типĕ утă вăл çиет.
Шурă йытă пирĕн пур,
Чупса, выляса çӳрет,
Ют çын килнине сиссен
Сике-сике вăл вĕрет.
**Степан Павлов.**
**Çĕмĕрле, 2-мĕш шкул.**

**Çуралнă кун**
Ман паян – çуралнă кун,
Кĕтрĕм ăна кунран кун.
Тĕрлĕ-тĕрлĕ парне пур,
Савăнăç ман, килсе кур!
Килсе тулчĕç юлташсем –
Чи юратнă хăнасем.
Савăнтăм эп чĕререн,
Питĕ лайăх ман туссем.
**Александра Егорова.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 20-мĕш шкул.**

**Пирĕн шкул**
Пирĕн шкул – чи пысăкки,

Чи ҫĕнни, чи лайăххи,
Чи мăнаҫлă ларакан,
Тарăн пĕлӳ паракан.
20-мĕш шкул ачисем,
Чи маттуррисем вĕсем,
«Пиллĕксемпе» «тваттăсем»
Илсе таврăнакансем.
**Маша Воробьева.**
**Ҫĕнĕ Шупашкар, 20-мĕш шкул.**

**Ҫуркунне**
Часах ҫитĕ ҫуркунне,
Вĕҫсе килĕҫ шăнкăрчсем,
Шăпчăксемпе чĕкеҫсем –
Пирĕн савăк юлташсем.
**Лера Емельянова.**
**Ҫĕнĕ Шупашкар, 18-мĕш лицей.**

**Тăван шкул**
Ир-ирех шкула чупатăп,
Вĕренме эп юрататăп.
Тăван шкул мана кĕтет,
Ыр сунса кĕтсе илет.
Ăс парать вăл кунсерен,
Савăнать килмессерен.
Уйрăлма вăхăт ҫитсен
Тунсăхлать чун-чĕререн.
Тăван шкулăм, ан кулян,
Килĕп эп татах ыран.
**Софья Васильева.**
**Шупашкар, 27-мĕш шкул.**

**Вĕрене**
Кашни ҫулах ҫуркунне
Эп лартатăп вĕрене.
Сывă ӳсчĕр ман туссем –
Ҫут ҫанталăк ачисем,
Илем кӳччĕр таврана,
Савăнтарччăр ман чуна.
**Дмитрий Данилов.**
**Ҫĕрпӳ, 2-мĕш шкул.**

**Евгений Францев – халăх асĕнче**
Ҫук, манмăпăр эпир нихҫан
Евгений Францевăн ятне!
Ҫĕршывшăн йывăр самантра
Ҫĕнтернĕ тăшмана тĕппех.
Вăл лайăх пĕлнĕ тĕллевне,
Ялан хăй пулнă-ҫке хастар!
Тăван ҫĕре вăл ирĕке
Кăларнă. Пирĕн манас мар!
Салтакĕсем чĕнмеҫҫĕ халь...

Пĕр палăк та пачах чĕнмест –
Май уйăх шăплăхĕ каллех
Çак паттăра ас илтерет!
Ăна тăван киле кĕтсе
Çемйи тек тăкнă куççульне...
Çĕршыв тасалнă тăшманран –
Вăл таврăнман çав вăрçăран...
Янтешĕмĕрĕн ячĕпе
Хитре урам хисепленет –
Герой сăнарĕ пĕчĕкрен
Пире хастар пулма чĕнет!
**Екатерина Хуморова.**
**Çĕмĕрле, 3-мĕш шкул.**

**Çуралнă кун**
Ман паян çуралнă кун –
Питĕ савăнăçлă кун!
Ман пата туссем килеççĕ,
Тĕрлĕ парне парнелеççĕ.
**Лариса Петрова.**
**Канаш, 5-мĕш шкул.**

**Хамăн аннене**
Кам пире çуратнă
Çакă тĕнчене,
Юратса ӳстернĕ,
Панă ăс-тăнне?
Кам-ха юратмасть пуль
Хăйĕн амăшне?
Пирĕншĕн çунать вăл
Кунне те çĕрне.
Кӳрентерес марччĕ
Хамăн аннене,
Яланах упрасчĕ
Унăн сывлăхне.
**Катя Сапожникова.**
**Шупашкар, 61-мĕш шкул.**

**Юратнă журнал**
«Асамат тата Шевле»
Питĕ юрататăп.
Сăвăсем те калавсем
Эп савса вулатăп.
Юлташсем манпа пĕрле
Журналсем илеççĕ.
**Юлия Муравьева.**
**Шупашкар, 10-мĕш шкул.**

**День смеха**
Представляете себе!
У меня есть динозавр,
А еще есть у меня

Крокодил и тигр.
Ха-ха-ха! Хи-хи-хи!
И мне вы поверили?
С днем смеха и шутки!
Дарья Румянцева.
Чебоксары, школа №28.

Юрий Гагарин
Юрий Гагарин –
Простой советский парень,
Первым в космос он слетал
И героем нашим стал.
Лев Федотов.
Чебоксары, школа №56.

Уйăп
Акă çитрĕ çуркунне,
Çанталăк та ăшăтать.
Вĕçсе кайрĕç уйăпсем,
Пирĕн хаклă тусăмсем.
Елизавета Сергеева.
Çĕнĕ Шупашкар, 5-мĕш шкул.

Манăн тус
Килте манăн йытă пур,
Тузик ятлă вăл, маттур.
Тузик манăн ăслăскер,
Питĕ лайăх йытă вăл.
Пограничник пек ман тус,
Каçхине сыхлать кил-çурт,
Ирхине тăрсан вара
Шав манпа вылять кăна!
Егор Власов.
Çĕмĕрле, 2-мĕш шкул.

Аппа
Манăн аслă аппа пур,
Медсестра пулса ĕçлет,
Кашни кун больницăра
Чирлĕ çынсене сиплет.
Пĕрне вăл укол тăвать,
Теприне эмел парать.
Мухтанатăп аппапа,
Савăнатăп тăванпа!
Карина Иванова.
Çĕнĕ Шупашкар, 20-мĕш шкул.

Сывлăхлă пулас тесен
Сывлăха эс çирĕплет
Сывлăхлă пулас тесен.
Вăхăтра çывăрма вырт
Ир вăранас тесен.

Ыйхăран ир вăрансан
Çăвăнма ан ман, юлташ.
Ялан лайăх апатлан,
Спортпа эсĕ халь туслаш.
**Настя Лопухина.**
**Шупашкар, 1-мĕш гимнази.**

**Физзарядка тăвар!**
Йĕркипе тăрса тухар,
Физзарядка халь тăвар:
– Сылтăм алă, сулахай,
Сылтăм ура, сулахай!
Эпир вăйлă та хастар,
Пит тĕреклĕ те патвар,
Пит маттур та пултаруллă,
Питре çиçет йăлтăр кулă.
Алла çĕклер çӳлелле,
Саламлар сар хĕвеле:
– Сылтăм алă, сулахай,
Сылтăм ура, сулахай!
Хĕвел çинче хĕртĕнсе,
Чупса, сиксе те ишсе
Çирĕп сывлăхлă ӳсер,
«Сывлăхлă пулас-ха», – тер.
Вырăнта тăрса утар,
Сывлăш çавăрса ярар.
Тăрар, ларар та тăрар,
Ывăнсан ларса канар.
Йĕркипе тăрса тухар,
Физзарядка халь тăвар:
– Сылтăм алă, сулахай,
Сылтăм ура, сулахай!
**Вика Леонтьева.**
**Шупашкар, 1-мĕш гимнази.**

**Анне – чи хакли**
Çĕр çинче пин тĕрлĕ çын,
Пĕринчен тепри хитре.
Анчах манăн аннерен
Çук илемли çĕр çинче.
**Настя Голенева.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 18-мĕш лицей.**

**Савăнăç**
Ак вĕçленчĕ ăмăрту,
Савăнатпăр чĕререн.
Раççейри спортсменсемпе
Мухтанатпăр кашнинпех.
**Настя Охтярова.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 18-мĕш лицей.**

**Çуркунне**

Çуркунне, эх, çуркунне –
Пĕтĕм чĕр-чун савăнать.
Ак тавралăх ешерет,
Илемĕпе мухтанать.
**Андрей Николаев.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 18-мĕш лицей.**

**Çуркунне**
Ачасем, куртăр-и?
Вĕçсе килнĕ кайăксем –
Шăнкăрчсем, чĕкеçсем,
Хура-хура кураксем.
Пуçтараççĕ кураксем
Йăва валли туратсем.
Ирпе-ирех шăнкăрчсем
Пуçтараççĕ мамăксем.
Кĕçех ларĕç йăвана
Чĕпписене кăларма,
Хăйсен чипер юррипе
Савăнтарĕç кăмăла.
**Настя Федорова.**
**Çĕмĕрле, 1-мĕш шкул.**

**Аттене**
Эп çыратăп çак сăвва
Аттене халалласа.
Пулăшать мана ялан,
Ăслă канашсем парса.
Манăн атте пит маттур,
Ун пек çын вара сайра.
**Таня Андреева.**
**Канаш, 5-мĕш шкул.**

**Саламлатăп**
Тăван кунпа сана саламлатăп,
Телей, çирĕп сывлăх сунатăп.
Пин-пин чечек парнелессĕм килет,
Пин-пин ыр сăмах ман калассăм килет.
**Александра Тимофеева.**
**Канаш, 5-мĕш шкул.**

**Саламлатăп**
Çуралнă кунпа саламлатăп,
Ырлăх-сывлăх, телей эп сунатăп.
Лайăх эс пурăн, нихçан ан чирле,
Çуралнă кунпа – юратнă анне!
**Ольга Григорьева.**
**Канаш, 5-мĕш шкул.**

**Çуркунне**
Çуркунне, çуркунне!
Шыв юхать çул каррипе,

Эпир карап яратпăр,
Çуркуннене саватпăр.
**Мария Волкова.**
**Çĕмĕрле, 1-мĕш шкул.**

**Çĕмĕрле**
Пысăк мар, хитре
Ман хула Çĕмĕрле.
Кунта пире килĕшет,
Чун-чĕре хĕпĕртет.
Çĕн вокзал, лавккасем,
Сарлака урамсем –
Пурте чи çывăххи,
Юрататăп çав тери.
**Мария Волкова.**
**Çĕмĕрле, 1-мĕш шкул.**

**Çуркунне**
Пăхрăм эп урамалла –
Сар хĕвел çунать унта.
Тухса чупрăм тулалла,
Мĕн тăвас ман хуль кунта.
Тăван урам тăвалла,
Шыв юхать анаталла,
Карап ярап юлташпа,
Кашни кунах хаваспа.
**Настя Кириллова.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 20-мĕш шкул.**

**Маттурсем**
Эпир маттур ачасем –
Йĕкĕтсем, хĕр пĕрчисем –
Чăваш чĕлхи тăрăшса,
Вĕренетпĕр савăнса.
«Асамат&Шевле» килсен
Хĕпĕртетпĕр чĕререн.
**Шупашкар, 61-мĕш шкул.**

**Çĕнтерӳ кунĕ**
Çĕнтерӳ кунĕ çитет –
Ман чĕре кăлт-кăлт сикет.
Кун пек чаплă уяв çук,
Çакна нихçан манас çук.
Эп пуплерĕм аттепе
Пуçарса калаçăва,
Пĕлтĕм: вăл та ашшĕ пек
Хӳтĕленĕ çĕршыва.
Мотострелок ман атте,
Асатте вара – зенитчик,
Платон – ватă асатте –
Пулнă харсăр минометчик.
Ленинград хӳтĕлевçи,

Вăл фронтран таврăнайман,
Гитлерăн тарçи-тĕрçи
Шелсĕр тăкнă вут-тăхлан.
Çакă сĕмсĕр тăшмана
Пирĕн халăх çĕнтернĕ,
Хăй йăвине – Берлина –
Хăваласа çитернĕ!
Паян эпир – çамрăксем –
Тав тăватпăр чĕререн:
Мухтав сире, Паттăрсем!
Мухтав, Çĕнтерӳçĕсем!
Пирĕн йăхри арçынсем
Пултаруллă та патвар.
Мана вĕсен ĕçĕсем
Пулма хистеç пит хастар!
**Илья Харитонов.**
**Шупашкар, 6-мĕш шкул.**

**Юратнă йытă**
Пирĕн ялта йытă пур,
Вăл пит ăслă та маттур.
Юрататъ ачасене,
Ют çынна кĕртмест киле.
Хуçирен апат кĕтсе
Вылятать вăл хӳрипе.
Çемçе тутлă премĕке
Эп паратăп Шарике.
**Настя Гордеева.**
**Шупашкар, 61-мĕш шкул.**

**Пĕчĕк тус**
Манăн шăллăм Захар пур,
Маншăн вăл – чи çывăх тус.
Эпир пĕрле вылятпăр,
Çуртсем, çулсем тăватпăр.
**Никита Ларев.**
**Шупашкар, 61-мĕш шкул.**

**Пукане**
– Илсе пар мана, анне,
Питĕ паха пукане.
Хам пекех илемлине,
Хитрине, лайăххине.
**Вика Калинина.**
**Шупашкар, 61-мĕш шкул.**

**Хĕлле**
Çĕнĕ çул та çитрĕ,
Ачасем каникулта:
Йĕлтĕрпе чупаççĕ,
Конькипе ярнаççĕ...
Вăхăт лайăх ирттереççĕ,

Шкулта аван вĕренме
Çирĕп вăй-хал пухаççĕ.
Дарья Никифорова.
Çĕнĕ Шупашкар, 20-мĕш шкул.

Ман анне
Ман анне – чи ăсли,
Ман анне – чи хитри,
Юрататăп эп ăна,
Кӳрентермĕп эп ăна.
Лиза Храмова.
Çĕнĕ Шупашкар, 20-мĕш шкул.

Сивĕ-сивĕ
Пăхрăм эп чӳречерен,
Урамра сип-сив иккен,
Кайăксем те курăнмаççĕ,
Сивĕрен вĕсем хăраççĕ.
Полина Орлова.
Çĕнĕ Шупашкар, 20-мĕш шкул.

Анне кулли
Анне кулли ялан илемлĕ,
Анне кулли пурне те кирлĕ.
Анне кулли ялан вăл пултăр,
Тăтăш ăшăтса вăл тăтăр.
Ольга Исмаилова.
Çĕнĕ Шупашкар, 20-мĕш шкул.

Атте пек
Аттене эп юрататăп
Патвар та вăйлă пулнăран.
Аттене эп хисеплетĕп
Мана яла нăс панăран.
«Эп те атте пек пулатăп», –
Тетĕп хамăн аннене.
«Аçу пек маттур эс пулăн», –
Хĕпĕртет маншăн анне.
Александр Сергеев.
Çĕнĕ Шупашкар, 20-мĕш шкул.

Манăн тус
Манăн тусăм кушак пур –
Питĕ лайăх сунарçă.
Çăмĕ ун шупка кăвак,
Хӳри вĕçĕ – шап-шурă.
Кушак тусăм каçсерен
Ларать манпа юнашар.
Куçне хупсан ерипен
Юрлать мăр-мăр юррине.
Александр Сергеев.
Çĕнĕ Шупашкар, 20-мĕш шкул.

Шурă юр
Урамра çăвать
Шурă юр.
Лăпкăн вăл ÿкет –
Тухса кур.
Илтĕм аллăма
Чăмăркка.
Пулчĕ Юр пике
Капăркка.
Анастасия Эврикова.
Çĕнĕ Шупашкар, 20-мĕш шкул.

Çуркунне
Акă çитрĕ çуркунне!
Вăл питĕ илемлĕ –
Çурăлаççĕ чечексем,
Юр юрлаççĕ кайăксем.
Шăратса хĕвел пăхать –
Пĕтĕм тĕнче савăнать!
Полина Коптелова.
Çĕнĕ Шупашкар, 5-мĕш шкул.

Çуркунне
Çитрĕ кĕтнĕ çуркунне:
Хĕвел сапать хĕлхемне,
Шăнкăртатса шыв юхать,
Йывăç-курăк чĕрĕлет.
Хăйсен тăван çĕршывне
Килсе çитрĕç шăнкăрчсем,
Пÿрт умĕнчи хурăн çинче
Шăрантараç юрăсем.
Елена Антонова.
Шупашкар, 47-мĕш шкул.

Çуркунне
Çитрĕ кĕтнĕ çуркунне:
Хĕвел сапать çуттине,
Кайăксем юрлаç юррине,
Савăнтараç ачасене.
Дарья Кириллова.
Шупашкар, 56-мĕш шкул.

Кушак çури
Манăн пур кушак çури,
Шурă мамăк евĕрли.
Икĕ куçĕ шăрçа пек,
Вылять, сикет мулкач пек.
Юрататăп Маçука,
Савăнатăп тусăмпа.
Дарья Кириллова.
Шупашкар, 56-мĕш шкул.

Аттеçĕм
Ман юратнă атте пур,
Вăл ĕçчен те пит маттур,
Яланах патвар çӳрет,
Пур çĕре те ĕлкĕрет.
**Иван Чиндарев.**
**Шупашкар, 24-мĕш шкул.**

Кукамай
Пит маттур ман кукамай,
Вĕрентет ĕçленĕ май,
Пушă вăхăт пур чухне
Алла илет тĕррине.
**Марина Карпилова.**
**Шупашкар, 24-мĕш шкул.**

Юратнă шкул
Эпĕ шкулта вĕренетĕп,
Кулленех унта çӳретĕп,
Вулама-çырма пĕлетĕп,
Лайăх паллăсем илетĕп.
**Анастасия Ширтанова.**
**Шупашкар, 24-мĕш шкул.**

Кайăксем
Тĕрлĕ-тĕрлĕ кайăксем
Вĕçсе килчĕç кăнтăртан.
Вĕсем валли ачасем
Йăва тунă кăмăлтан.
**Маркел Расьев.**
**Шупашкар, 24-мĕш шкул.**

Çуркунне
Урамра хĕвел пăхать,
Шурă юр та ирĕлет,
Шăнкăртатса шыв юхать,
Симĕс курăк та тухать.
Çуркунне кунтаваскать,
Сивĕ хĕле хăвалать.
Сивĕ хĕлĕ çилленет,
Хаяр куççульпе йĕрет.
Анчах хĕлĕн вăйĕ çук,
Çуркуннене çĕнеймест,
Ирĕксĕрех парăнать,
Çуркуннене çул парать.
Çуркунне вара савать
Вăрмансене, уй-хирсе,
Кайăксене, чĕрчунсе,
Тĕнчери пур çынсене.
**Татьяна Алексеева.**
**Шупашкар, 24-мĕш шкул.**

**Юратнă çынсем**
Чи юратнă ман çынсем:
Кукамайпа кукаçи,
Асаттепе асанне,
Ырă аттепе анне.
Чи хисеплĕ ман çынсем:
Тăвансемпе кӳршĕсем,
Юлташсемпе пĕлĕшсем,
Ырă кăмăллă çынсем.
**Кристина Орлова.**
**Шупашкар, 24-мĕш шкул.**

**Кушак**
Манăн килте кушак пур,
Хитре икĕ куçĕ пур,
Хăйма çиме юратать,
Шăши хыççăн хăвалать,
Мана ирех вăратать,
Шкула кайма васкатать,
Питрен пырса чуп тăвать,
Хӳрипе вара шăлать.
**Анна Романова.**
**Шупашкар, 24-мĕш шкул.**

**Вата асатте**
Манăн вата асатте
Пулнă вăрçăра.
Курнă хăйĕн куçĕпе
Çунакан яла.
Халь те, мирлĕ Вăхăтра,
Юн юхать хăш чух...
«Мĕн çитмест-ши халăха?» –
Тетĕп тепĕр чух.
**Анна Шишова.**
**Шупашкар, 24-мĕш шкул.**

**Вăрçă ачисем**
Вăрçă ачисем ачалăх курман,
Выçлăхпа нушаран хăтăлман.
Çав инкекрен пĕр-пĕрне çăлайман,
Мĕн çинине те пачах уяман.
Хĕрĕ е ывăлĕ юлнă пĕччен,
Ашшĕ фронтран пĕр çыру яриччен,
Амăш-асламăш хиртен киличчен,
Мăян пашалăвĕпе сăйличчен.
Килнĕ фронтран тăтăшах çырусем,
Пулнă вĕсем виç кĕтеслĕ хутсем.
Кĕтнĕ шанса, çавăнтах хăраса
Çав хутсенче шар-инкек пуласран...
Вăрçă ачи час-часах куççульпе
Йыхăрнă, чĕннĕ çухалнă тусне.

Тăснă ырхан та хавшак аллине
Çул варринче вилнĕ амăш енне...
Сивĕ те выçă ылханлă вăрçи!
Çав вăхăтри ачасен чĕр тамăк нуши!
Пĕттĕр çав вăрçă! Ан пултăр нихçан!
Тăнăçлăх, çак Çĕр çинче хуçалан!
**Никита Леонтьев.**
**Шупашкар, 1-мĕш гимнази.**

**Дети войны**
Дети войны, вы детства не видели,
Ждали, страдали, терпели сполна.
Добровольцами вы уходили на фронт,
Иль за станком заменяли отца.
Вы не жалея себя трудились всегда
Летом и осенью, зимой и весной.
Ждали отцов, братьев, дедов, родных,
Иль раньше них погибали порой.
Вы изменились, вы раньше всех выросли,
Вам повзрослеть очень рано пришлось.
Дети войны на других непохожие,
Сильные, крепкие – так уж сошлось…
Все завершилось: весна сорок пятого,
Слёзы и радости, и горя у всех…
Дети войны вернулись обратно,
Каждый из вас – настоящий герой!
**Елена Полутова.**
**Чебоксары, гимназия №1.**

Сывлăх вăл – тупра
Сывлăх вăл – тупра,
Эс ăна юрат, упра.
Ирхине ан наянлан,
Физзарядка эс тусам.
Спортпала эс туслашсан
Пит аван ача пулан.
Чупса кай эс çулпала
Икĕ-виçĕ çухрăма.
Шăлна тасат кашни кун,
Кахал ача эс ан пул.
Кашни кун выля та чуп,
Шывра ишме вăхăт туп.
Ангелина Андреева.
Шупашкар, 37-мĕш шкул.